28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ИЮЛЬ 22 ВЫРСАРНИКУН 140(6391) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

СССР Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флотне

№ 371. 1945 ҫулхи июлӗн 22-мӗшӗ

Совет халӑхӗн фашистла Германие хирӗҫ пынӑ Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑра пирӗн государствӑн Тинӗс-Ҫар флочӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн шанчӑклӑ пулӑшаканӗ пулчӗ.

ССР Союзне хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра фашистла Германи, ӑнсӑртран тапӑннипе усӑ курса тата вӑйлӑ ҫарпа тӑпӑнса, кӗске вӑхӑтрах пирӗн ҫарпа пирӗн флота аркатса тӑкма шутларӗ. Нимӗҫсем ҫар вӑйӗпе, хӑйсен авиацийӗпе тата Тинӗс-Ҫар флочӗпе пӗтӗҫсе, тинӗсре пуҫпулса тӑма ӗмӗтленчӗҫ.

Паллӑ ӗнтӗ, Германи стратегӗсен планӗсем типҫӗр ҫинче те, тинӗсре те пӗтӗмпех арканса кайрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар союзниксемпе пӗрле гитлерла ҫара тӗппипех аркатса тӑкрӗ те ӑна парӑнтарчӗ.

Оборона вӑхӑтӗнче те, наступлени вӑхӑтӗнче те пирӗн флот Хӗрлӗ Ҫарӑн тинӗс хӗррине тухакан флангӗсене шанчӑклӑн хӳтӗлесе тӑчӗ, тӑшманӑн суту-илӳ флотне тата ытти тӗрлӗ карапӗсене хӑватлӑн пыра-пыра ҫапса, хамӑрӑн коммуникацисене татти-сыпписӗр ӗҫлеме май туса пачӗ. Совет морякӗсен ҫапӑҫури ӗҫӗ ҫав тери хӑюллӑхпа, паттӑрлӑхпа, ҫапӑҫури пысӑк активлӑхпа тата вӑрҫӑри мастерлӑхпа палӑрса тӑрать. Шыв айӗн ҫӳрекен кимӗсем ҫинчи моряксем, шыв ҫинче ҫиелте ҫӳрекен карапсен морякӗсем, тинӗс летчикӗсем, артиллеристсемпе пехотинецсем вырӑс флочӗн ӗмӗрхи мӗнпур паха йӑлисене йышӑнса вӗсене малалла аталантарса пычӗҫ.

Балтика тинӗсӗнче, Хура тинӗсре тата Баренц тинӗсӗнче, Атӑл ҫинче, Дунайпа Днестр ҫинче совет морякӗсем вӑрҫӑн тӑватӑ ҫулӗ хушшинче вырӑссен тинӗсри мухтавлӑхӗн кӗнеки ҫине ҫӗнӗ страницӑсем ҫырса хучӗҫ. Флот советлӑ Тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйӗн тивӗҫне вӗҫне ҫитиех пурнӑҫа кӗртсе пычӗ.

Краснофлотец юлташсем, старшинасем те офицер юлташсем!

Совет халӑхӗ хӑйӗн флотне татах та вӑйлӑрах та хӑватлӑрах пулнине курасшӑн. Пирӗн халӑх флот валли ҫӗнӗ карапсемпе ҫӗнӗ базӑсем туса парӗ. Флотӑн задачи морякСен кадрӗсене ывӑнма пӗлмесӗр хатӗрлесси тата вӗрентсе пырасси, Отечественнӑй вӑрҫӑн боевой опытне пӗтӗмӗшпех ӑнланса илсе вӗренесси, тинӗс культурине, хӑйсен ретӗнчи дисциплинӑпа организацилӗхе татах та ҫӳлерех ҫӗклесси пулса тӑрать.

Сире ССР Союзӗн Тинӗс-Ҫар Флочӗн кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

Сывӑ пулччӑр совет державин Тинӗс-Ҫар флочӗ тата унӑн паттӑр морякӗсем!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Генералиссимусӗ И. СТАЛИН.

ССР Союзӗнчи Тинӗс-Ҫар Флочӗн Халӑх Комиссарӗн ПРИКАЗӖ

№ 110 Мускав хули 1945 ҫулхи июлӗн 22-мӗшӗ

Краснофлотец, старшина, офицер, генералсемпе адмирал юлташсем!

Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑн тӑватӑ ҫулӗ хыҫҫӑн пирӗн Тӑван ҫӗршыв Тинӗс-Ҫар Флочӗн Кунне мирлӗ тапхӑрта уявлать. Хӗрлӗ Ҫарӑн, Тинӗс-Ҫар Флочӗн тата пӗтӗм совет халӑхӗн паттӑр кӗрешӗвӗ фашистла Германие тӗппипех аркатса тӑкнипе вӗҫленчӗ.

Совет Союзӗн Тинӗс-Ҫар Флочӗ Хӗрлӗ Ҫарпа таччӑн пӗтӗҫсе пырса вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӑшмана хирӗҫ тинӗсре те, типҫӗр ҫинче те, сывлӑшра та паттӑррӑн кӗрешрӗ.

Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра Тинӗс-Ҫар Флочӗ хӑйӗн мӗнпур вӑйӗсемпе тата майӗсемпе пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн тинӗсри чиккисене хӳтӗлес тӗлӗшпе хӑй умне лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртсе пычӗ, тӑшманӑн суту-илӳ флотне тата ҫар флотне пыра-пыра ҫапрӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн тинӗс хӗрринчи тылӗсене хӳтӗлесе тӑрса, ӑна флангсенчен тӳррӗмӗнех пулӑшса пычӗ.

Тинӗс-ҫар базисене, Севастополе, Одессӑна, Ленинграда, Таллина, Ханкона паттӑррӑн хӳтӗлени, ҫарпа флотӑн боецӗсен ҫав тери пысӑк патриотизмӗн тӗслӗхӗ пулса историе кӗрсе юлнӑскер, тӑшманӑн пысӑк вӑйӗсене хӑй енне илсе тӑрса, тата Германи ҫарӗсем тӗп еннелле наступлени тӑвассине чарса, Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗн пӗр-пӗринпе пӗтӗҫсе кӗрешнин кӑтартуллӑ тӗслӗхӗ пулса тӑрать.

Пирӗн шыв айӗн ҫӳрекен кимӗсем, авиаци тата шыв ҫийӗпе ҫӳрекен ҫӑмӑл вайсем, тӑшманӑн тинӗс хӗрринчи ушкӑнӗсене апат-ҫимӗҫпе боеприпассем тата хӗҫпӑшалсем пырса парассине чарас тесе, тинӗс ҫинчи коммуникацисенче татти-сыпписӗр кӗрешнӗ вӑхӑтрах пирӗн флот Хӗрлӗ Ҫара ӑнӑҫлӑ ӗҫсем тума май паракан тинӗсри тулашри тата шалти питӗ паха коммуникацисене ӑнӑҫлӑн сыхласа пычӗ.

Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ вӗҫленнӗ тӗле Совет Союзӗн Тинӗс-Ҫар Флочӗ хаяр ҫапӑҫусенче ҫирӗпленсе, хальхи вӑхӑтри тинӗсри вӑрҫӑ тӗлӗшӗпе питӗ пысӑк опыт илчӗ те пирӗн государство интересӗсене сыхлас тӗлӗшпе хӑй умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртме пултарнине кӑтартса пачӗ.

Ҫар морякӗсем хӑйсен боевой ӗҫӗсемпе пысӑк патриотизма тата хальхи вӑхӑтри тинӗсри вӑрҫӑн кӑткӑс условийӗсенче вӑрҫма пӗлнине кӑтартса пачӗҫ.

Пиншер чаплӑ штурмансем, артиллеристсем, минерсем, подводниксем, катерниксем, тинӗс летчикӗсем, тинӗс пехотинецӗсем вырӑс флочӗн мухтавне йышлӑлатрӗҫ, Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑн паттӑр ҫӗнӗ йӑлисене туса хучӗҫ.

Тинӗс-Ҫар Флочӗн ӑнӑҫӑвӗсен ҫӑлкуҫӗ, Хӗрлӗ Ҫарӑн ӑнӑҫӑвӗсен ҫӑлкуҫӗ пекех, советлӑ социализмлӑ стройӑн никам ҫӗнтерейми аслӑ вӑйӗ, совет халӑхӗн аслӑ ҫулпуҫӗ, мӗнпур хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен Верховный Главнокомандующийӗ Совет Союзӗн Генералиссимусӗ Сталин юлташ генилле ертсе пыни пулса тӑрать.

Гитлерла Германие хирӗҫ пынӑ вӑрҫа ӑнӑҫлӑ вӗҫлени Тинӗс-Ҫар Флочӗн личнӑй составӗ умне татах та темӗн чухлӗ ҫӗнӗ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ.

Тинӗсре ҫапӑҫас тӗлӗшпе илнӗ вӑрҫӑри опыта ҫар ӗҫне ҫине тӑрса вӗренсе тата ҫирӗплетсе пымалла.

Сталин юлташ Совет Союзӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене яланах организациллӗхе, йӗркелӗхе тата дисциплинӑна ҫирӗплетме чӗнет. Офицерпа краснофлотецӑн тивӗҫӗ ӗнтӗ Верховный Главнокомандующин ҫак требованине тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫа кӗртесси пулса тӑрать.

Офицерсемпе краснофлотец юлташсем!

Сире Тинӗс-Ҫар Флочӗн Кунӗ ячӗпе саламлатӑп!

Сывӑ пулччӑр мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар тата унӑн ҫапӑҫури тӑванӗ Тинӗс-Ҫар Флочӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ ҫӗнтерӳҫӗ халӑх!

Сывӑ пултӑр Ленинӑн—Сталинӑн аслӑ партийӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен генилле полководецӗ—Совет Союзӗн Генералиссимусӗ Сталин юлташ!

ССР Союзӗн Тинӗс-Ҫар Флочӗн Халӑх Комиссарӗ Флот адмиралӗ Н. КУЗНЕЦОВ.

Литва ССР Верховный Совечӗн Президиумне Литва ССР Халӑх Комиссарӗсен Советне Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитетне

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ Советлӑ Социализмлӑ Литва Республики пилӗк ҫул тултарнӑ кун Литва рабочийӗсене, хресченӗсене тата интеллигенцине салам яраҫҫӗ.

Пилӗк ҫул каярах Литва халӑхӗ Сметонӑн фашистла режимне сирпӗтсе ячӗ те халӑх пӗтӗмӗшпех, тӳрех, пӗр тан тата вӑрттӑн сасӑласа, Литва Республики Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне кӗнине пӗр кӑмӑлпа ҫирӗплетрӗ.

Совет влаҫӗ Литва халӑхне чӑн ирӗклӗх, никама пӑхӑнманлӑх пачӗ, экономика, политика, культура тӗлӗшпе хӑвӑртӑн аталанса пыма май пачӗ.

Литва халӑхӗн ӗмӗрхи тӑшманӗсем—нимӗҫ захватчикӗсем—ӗмӗрсем хушши Литва ҫӗрӗсене туртса илесшӗн тӑнӑ, вӗсем Литва халӑхне чуралантарса нимӗҫе кӑларма хӑтланнӑ, Литва халӑхӗн культурине пӗтерсе лартма тӑрӑшнӑ.

Совет Союзне усаллӑн тапӑнса, нимӗҫ империалисчӗсем Литва ҫӗршывне кӗрсе кайрӗҫ. Литва халӑхӗн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне пӗтерсе лартрӗҫ. Литвара чуралӑхпа крепостниксен йӗркине туса хучӗҫ.

Хӗрлӗ Ҫар гитлерла империалистсене аркатса тӑкрӗ те Литва халӑхне нимӗҫсем чура тӑвас хӑрушлӑхран ӗмӗрлӗхе хӑтарчӗ. Литва халӑхӗн паттӑр ывӑлӗсем, Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче тата партизан отрячӗсенче ҫапӑҫса, фашистла Германие аркатса тӑкмашкӑн пулӑшрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫарти литовецсен стрелковӑй дивизийӗ хӑйӗн ҫапӑҫури ялавӗсене Орел хирӗсенчен пуҫласа Балтика ҫыранӗсем патне илсе ҫитерчӗ.

Аслӑ вырӑс халӑхӗ тата Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те тӑванла пулӑшнипе, Литва ӗҫҫыннийӗсем Литва халӑхӗ ӗмӗртен кӗтнине пурнӑҫа кӗртрӗҫ, мӗнпур Литва ҫӗрӗсене, авалхи Вильнюс столицине те тата Клайпеда порчӗпе пӗрле, Советлӑ Литва государствине пухса пӗрлештерчӗҫ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна ҫирӗп шанса тӑраҫҫӗ: Литва халӑхӗ Совет Союзӗнчи ытти мӗнпур халӑхсемпе тӑванла ҫирӗп ҫыхӑну тытассине малашне те пур майпа та вӑйлатса пырӗ, хӑйӗн пӗтӗм вӑйне хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене ҫирӗплетес тата халӑх хуҫалӑхне ҫӗклес ӗҫе парса тӑрӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ.

Латви ССР Верховный Совечӗн Президиумне Латви ССР Халӑх Комиссарӗсен Советне Латвири Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитетне

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ Советлӑ Социализмлӑ Латви Республикине тунӑранпа пилӗк ҫул тултарнӑ кун Латви рабочийӗсене, хресченӗсене тата интеллигенцине салам яраҫҫӗ.

1940 ҫулта Латви халӑхӗ Ульманисӑн халӑха хирӗҫ пынӑ фашистла режимне сирпӗтсе ячӗ те халӑх пӗтӗмӗшпех, тӳрех, пурте пӗр тан тата вӑрттӑн сасӑласа, Латви Республики Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне кӗнине пӗр кӑмӑлпа ҫирӗплетрӗ.

1941 ҫулта нимӗҫ захватчикӗсем совет ҫӗршывне вӑрӑ-хурахла тапӑнчӗҫ. Советлӑ Латви Республикин ҫӗршывне кӗрсе кайса, нимӗҫсем латыш халӑхӗн государственноҫне пӗтерсе тӑкрӗҫ, Латви ӗҫҫыннийӗсене нимӗҫсен чурисем тума хӑтланчӗҫ.

Совет халӑхӗпе унӑн Хӗрлӗ Ҫарӗ нимӗҫ империалисчӗсене аркатса тӑкрӗҫ. Аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе, Латви халӑхӗ фашистсен оккупацийӗнчен ирӗке тухрӗ, паттӑррӑн ҫапӑҫса, хӑйӗн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне каялла туртса илчӗ.

Латви халӑхӗн чи лайӑх ывӑлӗсемпе хӗрӗсем Хӗрлӗ Ҫарти латышсен корпусне тата партизансен отрячӗсене кӗчӗҫ те, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре паттӑррӑн ҫапӑҫса, латыш стрелокӗсен граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнчи чапне ӳстерсе ячӗҫ.

Отечественнӑй вӑрҫа тӑшмана пуҫӗпех ҫӗнтерсе вӗҫленине пула, нимӗҫ баронӗсемпе помещикӗсем темиҫе ӗмӗр хушши Латви ҫӗрӗсене тапӑнса тӑни, Латви халӑхне чуралантарма хӑтланни тӗп пулчӗ. Латви ӗҫҫыннийӗсем социализмлӑ мирлӗ строительствӑна ҫӗнӗрен тытӑнчӗҫ. Латви рабочийӗсем, хресченӗсем тата интеллигенцийӗ, Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе, хӑйсен промышленноҫӗпе ялхуҫалӑхне ура ҫине тӑратаҫҫӗ, республикӑри халӑх хуҫалӑхне нимӗҫсем кӳнӗ сурансенчен тӳрлетеҫҫӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна шанса тӑраҫҫӗ: Латви халӑхӗ, аслӑ вырӑс халӑхӗпе тата Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе ҫирӗп туслӑх тытса, малашне те хӑйӗн мӗнпур вӑйне ирӗклӗ совет республикисен тӑванла союзне ҫирӗплетес тата хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ҫарпа экономика хӑватне вӑйлатас ӗҫе парса тӑрӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ.

Эстони ССР Верховный Совечӗн Президиумне Эстони ССР Халӑх Комиссарӗсен Советне Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитетне

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ Советлӑ Социализмлӑ Эстони Республикин рабочийӗсене, хресченӗсене тата интеллигенцине Эстонире совет влаҫӗ туса хуни пилӗк ҫул тултарӑ май салам яраҫҫӗ.

Пилӗк ҫул каярах Эстони халӑхӗ хӑй ҫӗршывӗнче халӑха хирӗҫ пынӑ режима пӗтерсе тӑкрӗ те халӑх пӗтӗмӗшпех, тӳрех пӗртан тата вӑрттӑн сасӑласа, Эстони республики Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне кӗнине пӗр шухӑшлӑн ҫирӗплетрӗ.

Нимӗҫ фашизмӗн юнлӑн антӑхнӑ бандисем, Советлӑ Эстони ҫӗршывне кӗрсе кайса, Эстони халӑхӗн пултаруллӑ мирлӗ ӗҫне чарса лартрӗҫ. Нимӗҫ империалисчӗсем Эстони халӑхӗн никама пӑхӑнманлӑхне пӗтерсе лартрӗҫ те эстонецсене нимӗҫсен чурисем тума хӑтланчӗҫ. Фашистла нимӗҫ захватчикӗсем хуҫа пулса тӑнӑ ҫулсем Эстони халӑхӗн историйӗнче чи хура ҫулсем пулчӗҫ.

Эстони халӑхӗ курайми тӑшманпа паттӑррӑн ҫапӑҫрӗ. Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсенче, партизансен отрячӗсенче Эстони халӑхӗн ывӑлӗсемпе хӗрӗсем хамӑр совет ҫӗршывӗн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн хӑйсене хӑйсем шеллемесӗр ҫапӑҫрӗҫ. Эстонецсен гварди корпусӗ Эстони халӑхӗн ӗмӗрхи тӑшманӗсемпе—нимӗҫ захватчикӗсемпе—паттӑррӑн кӗрешсе, хӑйӗн ҫапӑҫури ялавӗсене мухтава кӑларчӗ.

Хӗрлӗ Ҫар гитлерла бандӑсене аркатса тӑкрӗ те нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене Советлӑ Эстониren сирпӗтсе кӑларчӗ. Аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе Эстони халӑхӗ фашистла нимӗҫ пусмӑрӗнчен ӗмӗрлӗхе хӑтӑлчӗ, чӑн-чӑн ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑх туянчӗ. Советлӑ Социализмлӑ Эстони Республикин ӗҫҫыннийӗсем, большевиксен партийӗ ертсе пынипе, промышленноҫа, ялхуҫалӑхне тата культурӑна ура ҫине тӑратма тытӑнчӗҫ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна ҫирӗп шанса тӑраҫҫӗ: Эстони халӑхӗ совет халӑхӗсен тӑванла туслӑхне малашне те ҫирӗп упраса тӑрӗ, нимӗҫ фашисчӗсем хуҫалӑхпа культурӑна кӳнӗ сиенсене часах тӳрлетӗ. Совет ҫӗршывӗн ҫарпа экономика хӑватне ӑнӑҫлӑн ҫирӗплетсе пырӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗнче

ВӐРНАР РАЙОНӖНЧИ КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛӖСЕМ, МТС-па ХАТӖРЛЕВ ОРГАНИЗАЦИЙӖСЕН РАБОТНИКӖСЕМ ТАТА ЯЛХУҪАЛӐХ СПЕЦИАЛИСЧӖСЕМ ЧӐВАШ АССР-ӗнчи МӖНПУР КОЛХОЗНИКСЕМПЕ КОЛХОЗНИЦӐСЕНЕ, МТС-семпе ХАТӖРЛЕВ ОРГАНИЗАЦИЙӖСЕН РАБОТНИКӖСЕНЕ ТАТА ЯЛХУҪАЛӐХ СПЕЦИАЛИСЧӖСЕНЕ ЧӖНСЕ КАЛАНИ ҪИНЧЕН

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Вӑрнар районӗнчи колхоз председателӗсен, МТС-па хатӗрлев организацийӗсен работникӗсен тата ялхуҫалӑх специалисчӗсен пуҫарӑвне ырланӑ.

Парти Обкомӗн бюровӗ ВКП(б) райкомӗсене Вӑрнар районӗнчи колхоз председателӗсемпе ялхуҫалӑх работникӗсем чӗнсе каланине колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗсенче, тракторӗстсен, комбайнерсен тата ялхуҫалӑх специалисчӗсен пухӑвӗсенче сӳтсе-явассине организацилеме, тырпула ӑнӑҫлӑн пухса кӗртессишӗн тата кӗракине ӑнӑҫлӑн ирттерессишӗн, государствӑна тырӑ тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли плана срокчен пурнӑҫа кӗртессишӗн, Чӑваш АССР 25 ҫул тултарнине уявланӑ кунсенче хамӑр илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртни ҫинчен Сталин юлташа памалли рапорта чи малтан алӑ пусма право илессишӗн хамӑрӑн аслӑ Ҫӗтерӳ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарса яма хушнӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем, аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн хутшӑнар!

Вӑрнар районӗнчи колхоз председателӗсем, МТС-па хатӗрлев организацийӗсен работникӗсем тата ялхуҫалӑх специалисчӗсем Чӑваш республикинчи мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе хатӗрлев организацийӗсен работникӗсене тата ялхуҫалӑх специалисчӗсене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

Хаклӑ юлташсем!

Сталин юлташ генилле ертсе пынипе совет халӑхӗ, гитлерла Германие ҫапса аркатса, историллӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм совет халӑхӗ пулӑшса тӑчӗ. Вӑрҫӑра ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн халӗ ӗнтӗ совет халӑхӗ мирлӗ строительство ӗҫне тытӑнать. Аслӑ Сталин пире вӑрҫӑ кӳнӗ сурансене хӑвӑртрах тӳрлетсе ҫитерме, хамӑрӑн Совет государствин хӑватне татах та ытларах ӳстерме чӗнет.

ССР Союзӗн Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: халӗ мӗнпур партипе совет тата хатӗрлев организацисемшӗн, ялти коммунистсемпе комсомолецсемшӗн, колхозниксемпе колхозницӑсемшӗн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемшӗн тата ялхуҫалӑхӗнчи специалистсемшӗн тырпула пӗр тӑккаламасӑр, вӑхӑтра та тӗплӗн пухса кӗме хатӗрленессинчен, ҫав ӗҫсене лайӑх туса ирттерессинчен тата, кашни район, кашни колхозпа совхоз государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли хӑйсен обязательствисене тултарассинчен пахарах задача урӑх ҫук, ҫакӑ вӑл хуҫалӑхпа политикӑллӑ чи пысӑк задача пулса тӑрать.

Партипе правительство «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ хӑйсен постановленийӗнче вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӗвӗн чи ответлӑ тапхӑрӗнчи ӗҫ программине палӑртса пачӗҫ. Партипе правительство тырпул пухса кӗртессипе ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлессине пӗтӗм халӑхӑн чи паха ӗҫӗ тесе шутлаҫҫӗ.

Пирӗн районри колхозсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫав хисеплӗ задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пычӗҫ. Пӗлтӗр вӗсем начар мар ӗҫлерӗҫ. Колхозниксем, МТС работникӗсем тата ялхуҫалӑх специалисчӗсем вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫленине пула, пирӗн район 1944 ҫулхи ӗҫсемшӗн Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Пирӗн колхозсем кӑҫал та начар мар ӗҫлерӗҫ. Кӑҫалхи ҫуракине эпир кӗске срокра, агротехника тӗлӗшӗнчен пысӑк пахалӑхлӑн туса ирттертӗмӗр. Пӑхӑр-ха пирӗн уйхирсене: колхозниксем вӑя хӗрхенмесӗр ӗҫлени пире мӗн тери пуян ҫимӗҫсем кӳрет! Пирӗн ҫав пуян тырпула халӗ ӗнтӗ вӑхӑтра та тӗплӗн пухса кӗртмелле.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленине сӳтсе-явса, эпир тырпул пухса кӗртес тата кӗрхи тырӑсем акса хӑварас ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса ирттерессишӗн, государствӑна тырпулпа ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх ҫимӗҫӗсем памалли плана срокчен тултарассишӗн хамӑрӑн аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма шутларӑмӑр.

Октябрӗн 1-мӗшӗччен эпир государствӑна обязательствӑсем тӑрӑх памалли тырра, МТС ӗҫленӗшӗн натуроплата тӳлемелли тырра пӗтӗмӗшпех парса татма тата Хӗрлӗ Ҫарӑн тырӑ фондне хывса хӑварма сӑмах паратпӑр; октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне эпир государствӑна ҫӗр улмипе пахчаҫимӗҫ, аш-какайпа ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем парса татпӑр. Эпир тырпула кӗске срокра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртме, кӗрхи тырӑсене — 6 ӗҫ кунӗнче, ҫурхи тырӑсене—12 ӗҫ кунӗнче вырса пуҫтарма, тырӑ вырса пӗтернӗ хыҫҫӑн 9—10 кунран кая хӑвармасӑр кӗлте кӳрсе капана хывма; октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтерме тата октябрӗн 10-мӗшӗнчен кая юлмасӑр кӗрхи ҫӗртме тумалли плана пӗтӗмӗшпех тултарма сӑмах паратпӑр.

Вӑрлӑхлӑх акнӑ нумай ҫул ӳсекен курӑксене вӑхӑтра ҫулса тата ҫапса пуҫтарасси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхса, эпир вӑрлӑхлӑх акнӑ курӑксене 5 кун хушшинче ҫулса пуҫтарма, ҫулма пуҫланинчен тытӑнса 18 кунран кая хӑвармасӑр курӑк вӑрлӑхӗсене ҫапса шӗкӗлчеме пулатпӑр. Ҫавӑн пекех эпир августӑн 25-мӗшӗнчен кая юлмасӑр кӗрхи тырӑсене пӗтӗмӗшпех акса пӗтерме тата вӗсене 90 процентран кая мар сеялкӑсемпе акса хӑварма палӑртрӑмӑр.

Техникӑллӑ культурӑсене (йӗтӗнпе кантӑра тата махоркӑна) эпир вӑхӑтра та пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртетпӗр, йӗтӗнпе кантӑра, татнӑ хыҫҫӑн 10 кунран кая хӑвармасӑр, 5 ӗҫ кунӗ хушшинче ҫапса пуҫтаратпӑр.

Вӑрлӑх участокӗсене эпир вӑхӑтра вырса пуҫтаратпӑр, ҫав участоксем ҫинчен пухса илнӗ тырпула уйрӑммӑн ҫапатпӑр; 1946 ҫул акма пирӗн пур колхозсен те паха вӑрлӑхсем пулаҫҫӗ.

Юлташсем—хамӑрӑн орденлӑ республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе хатӗрлев организацийӗсен работникӗсем тата ялхуҫалӑх специалисчӗсем! Эпир Сире тырпул пухса кӗртес тата кӗрхи тырӑсем акса хӑварас ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса ирттерессишӗн, государствӑна тырпулпа ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем памалли плана срокчен тултарассишӗн, ҫапла вара Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ уявра илнӗ обязательствӑсене тултарни ҫинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишӗн хамӑрӑн аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарса яма чӗнетпӗр.

Хамӑрӑн аслӑ Ҫӗнтерӳшӗн, хамӑрӑн Совет ҫӗршывӗн вӑй-хӑватне малалла тӗреклетсе пырассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту ялавне ҫӳлерех ҫӗклер!

Сывӑ пултӑр пирӗн Ҫӗнтерӳ!

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ Совет ҫӗршывӗ тата унӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӗ!

Сывӑ пултӑр пире мӗнпур ҫӗнтерӳсене тума хавхалантарса тата организацилесе пыракан пирӗн мухтавлӑ большевиксен партийӗ!

Сывӑ пултӑр халӑхсен юратнӑ ҫулпуҫӗ, генилле полководец, Совет Союзӗн Генералиссимусӗ Сталин юлташ!

Канашлу хушнипе ҫаксем алӑ пуснӑ:

ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Я. ПЕТРОВ, Райсовет исполкомӗн председателӗ П. ОСИПОВ, Райуполнаркомзаг С. ИГОРЕВ, МТС директорӗ Ф. НИКОНОВ, Районри ҫӗр ҫӗс пайӗн заведующийӗ М. МАКСИМОВ, Районри ҫӗр ҫӗс пайӗн главнӑй агрономӗ И. ДАНИЛОВ, МТС-ӑн старши агрономӗ П. ЛУКИН, Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ А. ВАСЯНИН, Уравӑш ял Советӗнчи «Первое Мая» колхоз председателӗ Я. ВАСИЛЬЕВ, Уравӑшри Киров ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ В. КУЗЬМИН, «Победа» колхоз председателӗ П. АНДРЕЕВ, Кӑмаша ял Советӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Я. СЕМЕНОВ, «Волонтер» колхоз председателӗ К. ЕФРЕМОВ, МТС-ри трактор бригадин бригадирӗ И. АЛЕКСЕЕВ.

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ

Совет халăхĕ кăçал Тинĕс-Çар Флочĕн кунне ĕмĕр манми хаваслă кунсенче уявлать. Вăйлă та хăрушă тăшмана хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçă чарăнчĕ. Гитлерла çарă аркатса тăкнă, фашистла ирсĕр тăшмана чĕркуççи çине лартнă. Совет халăхĕ тата унăн хĕçпăшаллă вăйĕсем çĕнтерчĕç, аслă та тĕрĕс ĕç, Ленин—Сталин ĕçĕ çĕнтерсе çиеле тухрĕ.

Гитлерла Германи пирĕн Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннă вăхăтра ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ тăватă флотран— Хĕрлĕ Ялавлă Балтика тинĕсĕнчи, Хура тинĕсри, Лăпкă океанри, Çурçĕрти флотсенчен тата тăватă флотилирен тăнă. Вăрçă вăхăтĕнче татах 6 флотили туса йĕркеленĕ.

Гитлерла захватчиксене хирĕç пынă кĕрешӳн хаяр кунĕсенче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн тăванла боевой туслăхĕ ӳссе çирĕпленсе пычĕ. Оборонăра та, наступленире те пирĕн типçĕр çинчи çарсемпе пĕтĕççе пырса, флотăн карапĕсемпе чаçĕсем хăйсен тĕп задачисене пурнăçа кĕртсе пычĕç: Хĕрлĕ Çарăн тинĕс хĕррипе тухакан флангĕсене хӳтĕлесе стратеги енчен çирĕплетсе пычĕç. Вĕсем пирĕн тинĕсри коммуникацисене сыхларĕç, тăшманăн коммуникацийĕсене вăйлăн пыра-пыра çапрĕç, десантсем антарчĕç, фашистла вăрă-хурахсене тинĕсре путарчĕç, гитлерла çăхансене сывлăшра пĕтерсе пычĕç.

Çапăçури ответлă операцисене линкорсемпе крейсерсем, эскадра миноносецĕсемпе торпеда катерĕсем, катер-тинĕс сунарçисем, мина лартакан суднăсем, хурал тральщикĕсем, шыв айĕн çӳрекен тĕрлĕ йышши кимĕсем тата ыттисем те хутшăнчĕç. Пирĕн портсемпе базăсем патне пымалли вырăнсене хӳтĕлекен çыран хĕрринчи артиллери тата тинĕсри авиаци активлăн çапăçрĕç.

Вырăс флочĕн авалхи йăлисенчен пĕрийĕ вăл—кирек епле пулсан та тăшман умĕнче карапăн ялавне антарма юраманни пулса тăрать. Ленинградпа Одессăшăн, Севастопольпе Сталинградшăн, Балтика тинĕсĕнчи портсемпе базăсемшĕн пулса иртнĕ çапăçусенче, Берлиншăн пулса иртнĕ çапăçусенче тата ытти нумай çапăçусенче те совет морякĕсем çак авалхи йăлана таса та тӳрĕ кăмăлпа чысласа пычĕç. Советăн пĕр карапĕ те тăшмана хирĕç çапăçнă чухне хăйĕн ялавне антармарĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăра пирĕн флот хăйĕн çапăçури хăватне йышлăлатрĕ. Одесса таврашне тăшман вуншар дивизи пухса тăратнă, анчах хупăрланнă гарнизон, Хура тинĕс флочĕн карапĕсемпе авиацийĕ пулăшнипе, тăшманăн пур атакисене те хăюллăн сире-сире пăрахнă. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе пĕрле Одессăна хӳтĕленĕ тинĕс пехотин чаçĕсем çав тери пысăк паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса пачĕç. Краснофлотецсенчен нимĕçсем вутран хăранă пек хăратчĕç. Хулана паттăррăн та хăюллăн хӳтĕлени, вĕсем тăшмана çав тери пысăк сухатусем кӳни пирĕн кăнтăрти çарсен положенине çăмăллатрĕ, нимĕçсен наступлени хăвăртлăхне чакарчĕ. Одессăшăн çапăçнă çĕрте нимĕçсен 250.000 çын вилсе тата аманса пĕтнĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Севастополе тĕлĕнмелле хăюллăн хӳтĕлени этемлĕх асĕнчен ĕмĕр-ĕмĕр тухмĕ. Çак хула çывăхĕнче тăшманăн 300.000 ытла салтакĕпе офицерне вĕлерĕ тата амантнă, çĕршер танкне тата темĕн чухлĕ çар техникине пĕтерсе тăкнă. Севастополь геройĕсем хурçă пек çирĕп тăни нимĕçсен 1942 çулхи уйтавлă «çуллахи наступленине» путлантарса лартнă сăлтавсенчен пĕрийĕ пулнă. 1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче Хура тинĕсри флот туса ирттернĕ Новороссийскри десантлă операци шухăшĕ тĕлĕшĕнчен те, пурнăçа кĕртни енчен те питĕ хăюллă та чаплă операци пулса тăрать. Кунта пирĕн карапсем питĕ вăйлă çирĕплетнĕ порта çĕмĕрсе кĕнĕ те вăйлă десант антарнă. Моряксем Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрле пилĕк кун çапăçнă хыççăн хулана тытса илнĕ.

Ленинграда хӳтĕлес тĕлĕшпе флот питĕ пысăк ĕç турĕ. Нимĕçсем пĕтерсе тăкма ĕмĕтленнĕ Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕ хăйĕн çапăçури активлă ĕçĕсене пĕр кунлăха та чармарĕ. Унăн карапĕсемпе çыран хĕрринчи батарейисем герой-хулана хӳтĕлекен çарсене вут-хĕмпе вăйлăн пулăшу парса тăнă. Ленинград çывăхĕнче Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе пĕрле тинĕс пехоти хăюллă та пултарулла çапăçнă.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Çурçĕрти флот та питĕ пысăк ĕç турĕ. Вăл пире Англипе тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе сыхăну тытмалли питĕ паха тинĕс çулĕсене сыхласа тăчĕ. Çурçĕр тинĕсĕнчи флот хăй умне лартнă задачăсене мĕнпур вăрçă тăршшĕпех мухтавлăн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Вĕсем пирĕн пата килекен союзниксен питĕ нумай конвойĕсене, çĕршер пысăк транспорта пĕрлештерсе тăраканскерсене, тинĕсе тухса кĕтсе илсе хамăрăн портсем патне ертсе пычĕç.

1944 çул совет çарĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсен çарĕсене татăклă çĕнтернин çулĕ пулчĕ. Тăшмана вунă хут пырса çапнинчен, Сталин юлташ 1944 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче каланăскерĕсенчен, сакăр хут пырса çапас операцисене Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе пĕрле Тинĕс-Çар флочĕн карапĕсем, авиацийĕ тата десант чаçĕсем хутшăннă. Хура тинĕс флочĕн карапĕсем 1944 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕпе майăн 12-мĕшĕ хушшинче, Крымпа Хура тинĕсĕн хĕвеланăçĕнчи çыранĕсене пĕрлештерекен коммуникацисем çинче, тăшманăн 191 карапне путарнă тата 70 карапне сиен кӳнĕ. Путарнă карапсене пĕтĕмпе илсен 220.000 тонна ытларах таяççĕ. Совет подводникĕсем вăрçă вăхăтĕнче тăшманăн тĕрлĕ класри 400 карапне таран путарнă, вĕсем пĕтĕмĕшпе 2.000.000 тонна таяççĕ. Тинĕс авиацийĕ 500 транспортпа танкер ытла, çавăн пекех тата тăшманăн нумай карапĕсене путарнă.

Гаджиевпа Фисанович подводниксен, Сафоновпа Каштанкин летчиксен, Ольшанскипе Куников тинĕс пехотинецĕсемпе десантниксен, Пьянзин зенитчикăн, Адамия автоматчикăн тата ыттисен нумайăшĕн вилĕмсĕр паттăр ĕçĕсем Отечественнăй вăрçă историне хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи боевой тивĕçне хăрама пĕлмесĕр хăюллăн, тӳрĕ кăмăлпа тата хăйсене хăйсем шеллемесĕр пурнăçа кĕртнин тĕслĕхне кăтартнипе кĕрсе юлаççĕ.

Советăн тинĕс морякĕсен ĕçне пирĕн Тăван çĕршыв питĕ пысăка хурса хакларĕ. Вăрçă вăхăтĕнче 400 моряк ытла Совет Союзĕн Геройĕн аслă ятне илме тивĕç пулчĕç. 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне 200.000 моряка ытла Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă. Флотри вуншар карапсемпе чаçсене гвардейски ятсем панă тата Хĕрлĕ Ялав парса палăртнă.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн вăйхăвачĕн чи паха çăлкуçĕсенчен пĕрийĕ вăл—вĕсем халăхпа питĕ тачă пĕтĕççсе тăни пулать. «Халăх пулăшман пулсан,—тенĕ Сталин юлташ,—совет çыннисем фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсемпе рудниксенче, транспортра ялхуçалăхĕнче вăйя шеллемесĕр ĕçлемен пулсан, Хĕрлĕ Çар ӳсемсем тума пултарайман пулĕччĕ». Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: «...Совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç туни историе кĕрсе юлать».

Тинĕс-Çар Флочĕ, Хĕрлĕ Çар пекех, совет халăхĕн юратакан ывăлĕ пулса тăрать. Большевиксен партийĕн X-мĕш съезчĕ йышăннă тăрăх Тинĕс-Çар Флотне юсама тата çĕнĕрен тума тытăннă вăхăтра, пирĕн халăх промышленноçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче çав тери пысăк ĕçсем тунипе пĕрлех, хăйĕн флотне те питĕ пысăк пулăшу парса пычĕ. Карапсем тăвакан рабочисем çар карапĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçе сахал мар вăй-хăват хучĕç. Малтанхи икĕ пилĕкçуллăх хушшинче кăна пирĕн карапсем тăвакан промышленность Тинĕс-Çар флотне, патша правительстви пĕррремĕш тĕнче вăрçи пуçланас умĕнхи вунă çул хушшинче тунă карапсен хисепĕпе танлаштарсан, хисепĕ енчен илсен тăватă хут ытларах, пĕтĕмĕшле тоннажĕ енчен илсен виçĕ хут ытларах карапсем туса панă. Совет халăхĕ хăйĕн флочĕн карапĕсене чи малта пыракан хĕçпăшалпа тата специальнăй оборудованипе: артиллерипе, торпеда аппарачĕсемпе, минăсемпе, сывлăшран тапăннине, торпедăпа тапăннине тата минăпа тапăннине хирĕç кĕрешмелли хатĕрсемпе, питĕ вăйлă прожекторсемпе, сăнамалли тĕрлĕрен хатĕрсемпе тата ыттисемпе те хĕçпăшаллантарчĕ.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Тинĕс-Çар флочĕ халăхран питĕ активлă пулăшу илсе тăчĕ. Ленинграда паттăррăн хӳтĕленĕ вăхăтра ĕççыннисемпе флот хушшинчи çыхăну татах та вăйлăрах палăрчĕ. Выçлăха, сивве тата тăшман тупăсемпе хаярран персе тăнине пăхмасăрах Ленинград ĕççыннийĕсем çапăçусенче сиенленнĕ карапсемпе механизмсене юсаса пычĕç. Транспортри рабочисем, Хĕрлĕ Çарăн тата флотăн боецĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлесе, çав тери кĕске вăхăтра Ладога кӳлли урлă «пурнăç çулĕ» тесе ят панă паллă çула хыврĕç. Çак çул ĕнтĕ паттăр Ленинграда «Аслă çĕрпе» çыхăнтарса тăчĕ.

Çурçĕр-хĕвеланăç пароходствинчи юханшыв флочĕн морякĕсем, Ладога кӳллинчи флотилин çар морякĕсемпе пĕрле, 1942 çулхи çулларан пуçласа, тăшман авиацийĕ вĕçĕмренех тапăнса тăнине пăхмасăрах, тăшман хупăрласа илнĕ Ленинград валли темĕн чухлĕ боеприпассемпе апат-çимĕç Ладога кӳлли урлă турттарса тăчĕç. Заводсенчен пĕринче тĕрлĕрен 20 йышши катерсем туса кăларнă. Вĕсен çапăçури пахалăхĕсене темĕн чухлĕ тинĕсри çапăçусенче тĕрĕслесе пăхнă. Çак завод правительствăн пысăк наградине — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне илме тивĕç пулчĕ.

Пирĕн Тăван çĕршывăн пур вырăнĕсенче те боевой карапсем туянма халăх хушшинче укçа-тенкĕ пухса тата парнесем ярса пулăшни те Тинĕс-Çар флотне пулăшнин питĕ кăтартуллă тĕслĕхĕ пулса тăрать. Çапла, Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕнчи торпеда катерĕсен соединенине шефа илнĕ Тамбов облаçĕнчи комсомолецсемпе пионерсем, шкул ачисемпе çамрăксем кĕске вăхăтрах 4.500.000 тенкĕ укçа тата пĕр вагон тĕрлĕрен парне пухса янă. Хăйсем Сталин юлташ патне çырнă çырăвĕнче комсомолецсемпе çамрăксем çав пухнă укçапа торпеда катерĕсем туса вĕсене «Тамбовский комсомолец» тата «Тамбовский пионер» ят пама ыйтнă. «Челябинский комсомолец», «Ярославский комсомолец», «Новосибирский комсомолец» ятлă шыв айĕн çӳрекен кимĕсене тата ыттисене те çамрăксем хушшинче пухнă укçа-тенкĕпе тунă.

Пирĕн çамрăксем тинĕсе юратаççĕ, Тинĕс-Çар флотне службăна кĕме тăрăшаççĕ. Комсомол флота шефа илнĕ малтанхи 1922—1923 çулсенчех, комсомол чĕннипе, советăн çамрăк патриочĕсен çĕнĕ вăйĕсем тинĕс-çар шкулĕсемпе вĕренӳ отрячĕсене пырса кĕчĕç. Тепĕр темиçе çултан вара тинĕс-çар флотĕнчи карапсем çине, чаçсене квалификациллĕ çамрăк специалистсен кадрĕсем, шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăк штурмансем, механиксем, артиллеристсем, связистсем пырса кĕчĕç. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Нахимов училищисем тата флот училищисене вĕренме кĕме хатĕрлекен шкулсем уçни пирĕн ачасемпе çамрăксене валли тинĕс-çар ĕçне çамрăклах вĕренме питĕ лайăх майсем туса парать. Çак училищĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăксем, малашне Тинĕс-Çар флочĕн аслă шкулĕсене пырса кĕрсе, унтан вара флотăн квалификациллĕ специалист-офицерĕсем пулса тухма пултараççĕ.

ССР Верховнăй Совечĕн 1-мĕш сессийĕнче, 1938 çулхи январь уйăхĕнче Молотов юлташ çапла каларĕ: «Пирĕн çакна шута илмелле: пирĕн çĕршыв пысăк, унăн чиккисене темĕн тăршшĕ тинĕссем çуса тăраççĕ, çакă ĕнтĕ пире ялан пирĕн флот çирĕп те вăйлă пулма кирлине аса илтерсе тăрать... Советлă вăйлă державăн хăйĕн интересĕсене килĕштерме пултаракан, пирĕн аслă ĕçе тивĕçлĕ тинĕсри тата океанри флот пулмалла». Тинĕс-Çар флочĕ вăрçă умĕнхи çулсенче хăй умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн флот хăйĕн хăватлăхне татах та ӳстерчĕ, хăйĕн пысăк мастерлăхне кăтартса пачĕ. Совет государствин çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне татах та йышлăлантарасси, çĕршывăн тинĕс-çар вăйĕсем çинчен ытларах та ытларах тăрăшасси рабочи класăн, инженерсемпе техниксен тата мĕнпур совет халăхĕн мухтавлă тивĕçĕ пулса тăрать.

Флотăн карапĕсемпе чаçĕсене çĕнĕ кадрсем парса тăни, боевой çĕнĕ карапсем туни, тинĕс-çар пĕлĕвĕсене массăсем хушшинче пропагандăласа сарни, ĕççыннисем çар морякĕсемпе таччăн çыхăнса пурăнни, комсомол флота шефа илнин ĕçне малалла çирĕплетсе пыни,—çаксем пурте ĕнтĕ пирĕн флота малалла аталанса пыма пулăшрĕç.

Большевиксен партийĕ тата чи аслă полководец, пирĕн юратнă çулпуçĕ, учитель Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕ гитлерла Германие çĕнтерсе историллĕ пысăк ĕç турĕ. Вĕсем ертсе пынипе совет халăхĕ халь те советлă, социализмлă стройăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне малалла шанчăклăн пырать. Пирĕн Тăван çĕршывăн хăватлăхне çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе совет морякĕсем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пухнă боевой йăласене вараламасăр, таса сыхласа усрĕç. Вĕсем советлă социализмлă хăватлă державăн тинĕсри тата океанри чиккисене таса та мухтавлăн сыхласа тăрĕç.

Адмирал Г. ЛЕВЧЕНКО.

Тырпул пухса кĕме хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслетпĕр

ЧУРАЧĂК, июлĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпул пухса кĕртесси çинчен йышăннă постановление илсенех районри партипе совет активĕн тата колхоз агитаторĕсемпе вĕсен руководителĕсен семинарне ирттертĕмĕр. Вăл семинарта çак паха документа колхозниксене мĕнле ăнлантарса памалли çинчен каласа патăмăр. Халĕ кашни ял Советнех ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕсем тухса кайрĕç. Вĕсем колхозниксен пухăвĕсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленине ăнлантарса параççĕ, çавăн пекех çак постановление колхозниксене бригадăсенче, звеносенче ăнлантарса пама колхозри агитаторсене куллен пулăшса пыраççĕ.

Партипе правительство кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртекен колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем ăнăçлă пыраççĕ. Сăмахран, Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра утă çулса тата ăна капана хывса пĕтернĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз чи лайăх утта государствăна парса татрĕ. Силос хывмалли плана пĕтĕмпех тултарнă, кунта пурĕ 80 тонна силос хывнă. Тырпул пухса кĕмелли машинăсене юсаса пĕтернĕ, çурласем, çавасем çителĕклĕ, вĕсене кирлĕ пек хатĕрлесе хунă. Тырпула çумкурăкĕсенчен тасатнă, çĕр улмине çумласа тата купаласа пĕтернĕ.

«Гигант» колхозра та ĕçсем лайăх пыраççĕ. Кунта та утă çулса, капана хывса пĕтернĕ тата государствăна та парса татнă. Машинăсем юсавлă, урапасем, ут таврашсем çителĕклĕ тата юсавлă. Тырпул пухнă çĕрте машинасене сĕрмелли маççем, урапа тикĕчĕ çителĕклĕ. Колхоз 110 тонна силос хывса, хăйĕн планне ытлашшипех тултарнă. Силос хывас тата вĕлтĕрен, армути пухас ĕç колхозра халĕ те ăнăçлăн пырать.

Районра 57 колхоз тырпул пухса кĕмелли плансем туса пĕтернĕ. Халĕ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ тăрăх хăшпĕр ĕçсен срокĕсене çĕнĕрен тăваççĕ, пур тĕлте те вăл срокĕсене кĕскетеççĕ. Тырра вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕртес шутпа, машинăсемпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме палăртаççĕ.

Тырпул пухса кĕме начар хатĕрленекен колхозсем те пур-ха. «Большевик», «Камай» колхозсем тырпул пухса кĕрме пачах хатĕрленмеççĕ. Утă çулас ĕç ку колхозсенче начар пырать. Машинăсене, урапасене, ут таврашсене юсаса пĕтермен. Çурласемпе çавасене шута илмен. «Камай» колхозра лашасем валли 30 комплект ут таврашсем кирлĕ, вĕсен 26 комплект кăна пур, 8 урапа çитмест. «Социалистический путь» колхозăн та 5 урапа çитмест, пуррисем те начар.

Чылай колхозсенче машинăсемпе урапасене сĕрме тикĕтпе маç çук. Ку тĕлĕшпе райсоюз та, вырăнти ялпосем те нимĕн те тумаççĕ. Райсоюз кăçал, лапаткасемсĕр пуçне, тырпул пухса кĕртес ĕçре кирлĕ япаласене нимĕн те кӳрсе килмен.

Халĕ кашни колхозрах утă çулаççĕ тата тырпул пухса кĕме хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеççĕ.

Ф. АНИФЕРОВ,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Выльăх-чĕрлĕхшĕн тăрăшаççĕ

Красноармейски районри нумай колхозсем хĕллене пикенсех хатĕрленеççĕ. «Красная Шатьма» колхоз (председателĕ Г. Филиппов юлташ) çуракине вĕçленĕ хыççăнах выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсама тытăнчĕ. Паянхи куна вĕсем çĕнĕрен ĕне вити туса пĕтерчĕç, сысна витине те ĕлĕкхи вырăнĕнчен куçарса юсаса лартрĕç, пӳтексене хупма çĕнĕ вите туса лартнă. Выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ ытти çуртйĕрсене, сăлсене, кил картисене юсаççĕ е çĕнĕрен тăваççĕ.

Тинçырма ял Советне кĕрекен «Дружба» колхозра та ĕнесем валли ăшă вите туса пĕтерчĕç.

Ямайкасси ял Советне кĕрекен «Стахановец» колхозра (председателĕ А. Никитин юлташ) выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсаса пĕтереççĕ. Кунта выльăхсем валли хĕллене çителĕклĕ таран апат хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Ферма заведующийĕ Е. Грачева тăрăшнипе пула паянхи куна вĕсем 10 лав вĕлтĕрен, 4 лав армути хатĕрленĕ тата 10 тонна силос хывнă.

Анчах та уйрăм колхозсенче хĕле хатĕрленессипе нимĕн те туманнине те тĕл пулма пулать-ха. Акă «Большевик» колхозра (председателĕ Т. Евгеньев, ферма заведующийĕ В. Семенова) выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕссене юсас ĕçе сӳрĕккĕн туса пыраççĕ, силос хывма тытăнман, вĕлтĕрен, армути хатĕрлемеççĕ.

Зоотехник И. ПОЛЯКОВ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Чăваш АССР Государство Издательстви СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлене вырăсла тата чăвашла уйрăм кĕнеке туса кăларать.

Кĕнекесене çак кунсенчех çĕрĕç органĕсем урлă МТС-семпе колхозсене ярса параççĕ.

Америка обозревателĕ Совет Союзĕн тулашри политики çинчен

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Крисчен Сайенс Монитор» хаçатăн обозревателĕ Стивенс, Совет Союзĕ хăйĕн интересĕсене тивекен тĕрлĕ ыйтусене татса пама ыйтни çинчен çырса, çакна палăртать: Совет Союзĕ Карс, Артвин тата Ардаган хулисене каялла тавăрса пама ыйтни пит те тĕрĕс, тет.

Стивенс çапла çырать: «Кавказ чикки çывăхĕнчи Карс, Артвин тата Ардаган хулисене тавăрса пама ыйтса, Совет Союзĕ вырăс территорийĕн каялла илмен юлашки пайне илесшĕн. Вăл территорие Совет Союзĕ хăй пуçланса кайнă чухне, унăн çителĕклĕ вăй пулман вăхăтра çухатнă. Истори енчен пăхсан, вăл территорисем Армени территорийĕ шутланаççĕ. 1920 çулта вĕсене Турци вăйпа туртса илнĕ. Хальхи вăхăтра вăл территорисенчи халăх Армени халăхĕ мар пулсан, вăл тĕнчери пĕррремĕш вăрçă вăхăтĕнче туроксем армянсене пурне те вĕлерсе тухнинчен килет. Çак япала вăл тавлашуллă территори туроксен аллинче пулмаллине пĕлтермест». Стивенс малалла çапла çырать: «Совет Союзĕ çав районсене Совет Арменийĕн территорипе кĕртесси çинчен ыйтнипе пур армянсем те хапăл тăвасси паллах. Туроксемпе-и, е вырăссемпе пулмалла-и? текен ыйту тухса тăрсан, армянсен пысăк пайĕ вырăссене хапăл тăвать».

Совет Союзĕ Дарданелл проливне контроль тума ыйтни те тивĕçлĕ пулнипе палăртса, Стивенс Турцие акăлчансем пулăшса тăнипе грексемпе союз тума хăтланассинчен асăрхаттарать.

Стивенс çапла çырать: «Хура тинĕс районĕнче тинĕс çулĕсемпе интересленекен пысăк держава пулса тăрса, Совет Союзĕ, Пĕрлешӳллĕ Штатсем Панама ыйтăвĕпе интересленнĕ пекех, Дарданелл ыйтăвĕпе интересленет. Кунсăр пуçне, Турци хăй Германие хирĕç кая юлса вăрçа тухни çинчен пĕлтерчĕ пулин те, Германин тата тĕнĕл держависен хӳрешкисен çар карапĕсене Дарданелл проливĕ урлă тухма ирĕк панă тесе шутлама пулать. Вăл ĕнтĕ Монтрере тунă килĕшĕве тӳрремĕнех пăснине тата Совет Союзĕпе ытти çĕршывсен интересĕсене сиен кӳнине пĕлтерет.

Çаксене асра тытса, çапла шутлама пулать: Сталин Дарданелл проливĕн пулас хăрушсăрлăхне сыхлама ыйтĕ. Вăл ĕнтĕ çавăн пек ĕçсем малалла урăх пулмĕç тесе Турци паракан сăмахпа лăплана мар, тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушать».

Стивенс çапла çырать: Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнусенче пулса тăнă хальхи хăрушлăх Совет Союзĕ кăларса тăратнă требованисемпе сахал çыхăнса тăрать, вăл акăлчансем Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи вăйĕсем улшăнасси çине шиклĕн пăхнинчен ытларах килет. Çакăнпа усă курса туроксем, паллах, Англипе çирĕп çыхăнса тăракан Турципе Греци блокне туса хума хăтланĕç. Çапла майпа вĕсем Совет Союзĕ Вăтаçĕр тинĕс районне кĕрсе каяссине чăрмантарма тăрăшĕç.

Стивенс çапла калать: «Российăна Вăтаçĕр тинĕс патне тата тĕнчери океан çулĕсем çине кăларас мар тесе Турципе Греци тăвакан кирек епле хӳме те аслă державăсен пĕрлĕхне савăл çапса уйăрма хăтланнипе пĕрех пулса тăрать».

НЬЮ-ЙОРКРА ФАШИЗМА ХИРĔÇЛЕ ДЕМОНСТРАЦИ ПУЛСА ИРТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри «Испание ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет», производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен тĕрлĕ профсоюзсем, çавăн пекех тата Испани чĕлхипе калаçакан çынсен организацийĕсем фашизма хирĕçле демонстраци туса ирттернĕ. Демонстрантсем Франко Испанийĕпе халех сыхăну тытма пăрахма ыйтнă. Муниципалитет членĕ Дэвис тата муниципалитет членĕн кандидачĕ Коннолли сăмах тухса каланă. Хăйсен сăмахĕсенче вĕсем Испание апат-çимĕç тата ытти продуктсем тăратнине сивленĕ. Вĕсем Испани республиканецĕсене пулăшу пама чĕннĕ. Демонстрантсем нумай плакатсем йăтса пынă. Вăл плакатсем çинче Франко вăрçă вăхăтĕнче тĕнĕл держависемпе пĕрле ĕçленĕ, Испани фалангисчĕсем Латинла Америка çĕршывĕсенче ашкăнаççĕ, тесе çырнă.

США-н 5 ÇУЛ ХУШШИНЧИ ТИНĔС-ÇАР СТРОИТЕЛЬСТВИ

ВАШИНГТОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). США тинĕс министерстви çапла пĕлтернĕ: 8 çар верфĕ тата 28 уйрăм верфсем 1940 çулхи июлĕн 1-мĕшĕпе 1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хушшинче 1.322 çар карапĕ тунă. Вăл шутра 10 линкор, 27 авианосец, 112 эскорт авианосецĕсем, 12 йывăр крейсер, 33 çăмăл крейсер, 370 эсминец, 548 хурал эсминецĕ тата 210 подводнăй лодка тунă.

США-н çар верфĕсем 5 çул хушшинче пĕтĕмпе 331 карап, уйрăм çынсен верфĕсем 991 карап туса кăларнă.

Çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, кунсăр пуçне 1945—1946 çулсенче тата 223 çар карапĕ туса пĕтермелле.

США çар министерстви çапла пĕлтерет: 1940 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс флотĕнче мĕн пурĕ те 383 çар карапĕ кăна пулнă.

БОЛГАРИН ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ СУЙЛАС УМĔН

СОФИЯ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх пухăвне (парламента) суйлас ĕçе хатĕрленесси вĕçленсе пырать. Суйлавçăсен списокĕсене туса çитернĕ. Вĕсене суйлавçăсем хăйсем каланă тăрăх тӳрлетсе тухнă. Суйлавçăсен кĕнекисене хатĕрлесе çитереççĕ, вăл кĕнекесене çывăхри кунсенчех суйлавçăсене памалла. Суйлама çуртсем уйăрса хураççĕ. Халăх пурăнакан пунктсенче пуринче те суйлав комитечĕсем тăваççĕ.

Суйлавсем çывхарса килнĕ май пĕтĕм çĕршывра правительствăпа Отечественнăй фронт ĕçĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе халăх активлăхĕ ӳсни палăрать. Хресченсене пулăшма ялсене рабочисен бригадисем туса каяççĕ.

ЮТ ÇĔРШЫВ КОРРЕСПОНДЕНЧĔСЕМ ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «П. М.» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Греци компартийĕн лидерĕ Захариадис ăна çапла каланă: «Хальхи вăхăтра Грецире хура реакци валли кăна ирĕклĕх пур», тенĕ.

Корреспондент каланă тăрăх, 16.000 патриот халь тĕрмесенче лараççĕ. Грецин хальхи правительстви массăсенчен уйрăлса тăрать, хăйĕн позицине вăл террористла майсемпе çирĕплетме тăрăшать. Грецире демократиллĕ вăйсем пĕрлешме пултарайман. Прогрессивнăй правительство туса хунă хыççăн ЮНРРА тăратакан таварсене чарса лартĕç тесе хăраççĕ хăшпĕр лидерсем.

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ Барбер, Грецири лару-тăру çинчен пĕлтерсе, прогрессивнăй партин лидерĕ Кафандарис каланине парать. Вăл çапла каланă:

«Грецире чăн-чăн террор пуç пулса тăрать. Ăна нациллĕ гварди отрячĕсем тата монархистла бандитсем туса пыраççĕ». Кафандарис малалла çапла каланă: хальхи условисенче Греци правительстви кĕркунне туса ирттерме палăртса хунă плебисцит «1935 çулта ирттернĕ йĕркесĕр плебисцит пек çеç пулать. Çавăн хыççăн çĕршыва Георг король таврăнчĕ. Çавăн пек туни вăл тирани, анархи тата преступленисен режимĕ хатĕрлени çеç пулать. Хамăр парти ячĕпе калас пулсан,—тенĕ Кафандарис,—эпĕ çапла калатăп: демократирен çавăн пек мăшкăллакан ĕçе эпир хутшăнмастпăр».

Кафандарисăн çак сăмахĕсене кăтартса, корреспондент çапла çырать: «Либераллă-демократиллĕ ытти ушкăнсем Кафандарис примерĕпе суйлава хутшăнмасăр юлаççĕ пуль, тесе шутлаççĕ».

КĔСКЕН

* Норвегири пуканелле «правительство» пуçлăхĕ пулнă Квислинга июль уйăхĕн вĕçĕнче е августăн пуçламăшĕнче суд тума тытăнаççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Борнео утравĕ çинче Австрали çарĕсем нефть центрне Самбоджана йышăннă.

Американецсен Окинава утравĕ çинчи 200 ытла бомбардировщикĕпе истребителĕ японецсен Шанхайри аэродромне тапăннă. Ытти самолетсем Японин Кюсю утравĕ çинчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Американецсен 7-мĕш флочĕн самолечĕсем японецсен грузсем турттаракан пысăк мар 27 суднине шыва путарнă е сиен кӳнĕ.

ВАШИНГТОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Япони çыранĕсем патĕнче Америка самолечĕсем японецсен 13 суднине сиенленĕ. Тинĕс пехотин самолечĕсем Амами (Рюкю) утравĕсене тапăннă.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 600 ытла бомбардировщикĕ японецсен Хитаци, Цоси, Фукуи тата Окдзаки хулисене тапăннă.

ХРОНИКА

Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕ П. Д. Дашков юлташа Чăваш АССР-чи Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕн Заместителĕ пулса ĕçлессинчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Главсельэлектрон Чăваш АССР конторне Шупашкарта ĕçлеме главнăй бухгалтер, материалсене шута илекен бухгалтер тата план отделĕн начальникĕ кирлĕ. Продовольстви карточкисем параççĕ. Главнăй бухгалтерăн литернăй снабжени пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Карла Маркса, 7.

Воинсене кĕтсе илме хатĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Хусакасси ялĕнчи «Комбайн» колхоз çĕнтерӳçĕ-воинсене кĕтсе илме тивĕçлипех хатĕрленет. Çартан таврăнакан воинсене разъездран хăвăртрах киле çитерме колхозăн «Морзай» ятлă ăйăрне уйăрнă. Киле таврăнсан колхоз кашни воина пĕрер центнер тырă, пĕрер килограмм пыл, ĕне çуккисене пĕрер килограмм çу пама йышăннă.

— Çĕнтерӳ паттăрĕсене чи чаплă хăна пек кĕтсе илетпĕр,—теççĕ колхозниксем хавхаланса.

Комсомолецсен паха пуçарăвĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Тракушкăньри Чкалов ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем Çапăçури Çартан киле таврăнакан паттăр воинсене лайăх кĕтсе илес шутпа ятарласах пухура ыйту лартса сӳтсе-явнă. Вĕсем фронтовик çемьисен пахчисенчи çĕрулмипе ытти пахчаçимĕççене пăхса ӳстерес ĕçе хăйсем çине йышăннă. Ку ĕçе тума пионерсемпе шкул ачисене те явăçтарнă. Çĕрулмине купаласа тухнă, çумкурăкĕнчен тасатнă.

Халĕ комсомолецсемпе шкул ачисем ытти пахчаçимĕççене çумкурăксенчен тасатас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

ЯЛАВСЕН ЗАЛĔ УÇĂЛНĂ

Июлĕн 17-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарăн Тĕп музейĕнче ялавсен залĕ уçăлнă. Постамент çинче, кĕленче калпак ăшĕнче, Хĕрлĕ Çар воинĕсем Германи рейхстагĕ çине çĕклесе лартнă Çĕнтерӳ ялавĕ тăрать. Çĕнтерӳ ялавĕ тавра Отечественнăй аслă вăрçăра чапа тухнă паттăр гвардейски чаçсен ялавĕсене тăратса тухнă.

Çав залра нимĕçсен 200 ялавне тата Гитлерăн хăйĕн штандартне курма пулать. Çав тытса илнĕ ялавсене Çĕнтерӳ парачĕ вăхăтĕнче пирĕн воинсем Хĕрлĕ площадьре мавзолей умне пырса пăрахнă.

Малтанхи кунах ялавсен залне Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем, çартан таврăнакан воинсем, акăлчан металлургĕсен профсоюз делегацийĕн членĕсем тата ыттисем те пырса курнă. (ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—?7, издательство конторин — 0—23.

НТ 00377 Типографи №1, Управлени полиграфпромышленности при НК ЧАССР. №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000